Тăвай районĕн хаçачĕ
# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ
1935 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă
• 2024 çул •
Çĕртме (Июнь), 28
• ЭРНЕКУН •
24/10714/№
Хакĕ ирĕклĕ

РЕСПУБЛИКА КУНĔ

## Уяв савăнăç кӳчĕ, нумайлăха асра юлĕ

**Тăвай округĕнче Республика кунĕ анлăн та мăнаçлăн иртрĕ. Ир-ирех «Аль» спорт шкулĕн стадионне халăх утма пуçларĕ. Чуна хумхантаракан юрă-кĕвĕ юхрĕ. Уявăн савăнăçлă саманчĕ çĕнетнĕ хыççăн Тăвайри халăх таврапĕлӳ музейне уçнипе пуçланчĕ. ЧР культура министрĕ Светлана Каликова, унăн çумĕ Татьяна Казакова, округ пуçлăхĕ Олег Ломоносов, ЧР Патшалăх ветеринари службин ертӳçи Александр Шакин, таврапĕлӳçĕсем, ял çыннисем хутшăнчĕç унта.**



«Культура» наци проектне хутшăннипе музея тĕпрен юсама пултарнă. Çĕнĕрен оборудовани туяннă. Çурта çĕнетме округри çынсем 117 пин тенкĕ пухса панăран, пуçаруллă бюджет проекчĕпе республика бюджетĕнчен 4,7 млн, муниципалитет округĕнчен 1 млн тенкĕ янă.



Кăçал унпа курав стенчĕсене хатĕрлесе çитернĕ. «Культура» наци проекчĕпе вара федераллă, республикăпа округри бюджетсенчен уйăрнă 15,6 млн ытла тенкĕпе çурта тĕпрен юсанă.

Республика кунĕ тăвайсемшĕн тепĕр пулăмпа та палăрса юлĕ. ЧР Пуçлăхĕ Олег Николаев, ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов, патшалăх ветеринари службин ертӳçи Александр Шакин, вырăнти влаç представителĕсем Чутей ялĕнче сыр тата унран тĕрлĕ юр-вар хатĕрлемелли цеха уçрĕç. Сыр хатĕрлес ĕçе пуçарнă Татьяна Юркина Чăваш Енри фермер шкулĕнче пĕлӳ пухнă. Ял хуçалăх министерствин конкурсĕнче 8 млн тенкĕлĕх «Перспектива» грантне тивĕçсе тата 3,5 млн тенкĕ хушса сыр производствине йĕркелесе янă. Иртнĕ çул тавар кăларассин калăпăшĕ 800 килогрампа танлашнă, халĕ унта вун-вун тĕрлĕ продукци кăлараççĕ.

Уяв программи пуян пулчĕ. Пĕр лапамра иртнĕрен куракансене культура мероприятийĕсем те, спорт ăмăртăвĕсем те хăйсем патне йыхăрчĕç. «Аль» спорт шкулĕн стадионĕнчи «Несĕлсен ăс-хаклăхĕ – малашлăхрисемшĕн ырă пил» ятлă театрализациленĕ представление Раççейри çемье

**(Малалли 2-мĕш стр.)**



ĔÇÇИ

## Агрегатсем курăк пуссинче

**Хĕл хырăмĕ аслă, тенĕ ваттисем. Çавăнпа утă та, сенажпа силос та хатĕрлетпĕр эпир çулленех. Выльăх-чĕрлĕх лайăх хĕл каçасси шăпах паянхи кун мĕнле ĕçленинчен килет. Ытлă-çитлĕ тата пахалăхлă апатпа продукци те хушать ыр выльăх.**

Хальхи вăхăтра эпир, хĕле хатĕрленсе, люцерна курăкĕнчен утă пресласа хатĕрлеме тытăнтăмăр. Люцернăна Е-403 комбайнпа Юрий Гурин çулса пăрахрĕ. Агрегачĕ çĕнĕ, пĕр çул кăна ĕçленĕ унпа, курăксене 6 метр сарлакăш илет. Çавăнпа хăвăрт ӳсĕнет. Николай Иванов механизатор трактор кĕреплипе тавăрчĕ. Александр Афонин яланхи пекех пресс-подборщикпе тухрĕ уя, агрегат рулон хыççăн рулон янтăласа пырать, сахал мар пухăнать паха утă. Ăна люцернăран кăна мар, çаран курăкĕнчен те хатĕрлеме пăхнă. Утă çителĕклĕ пулĕ ферма выльăх-чĕрлĕхĕ валли.

Сенаж та нумай çул ӳсекен курăксенчен хывăпăр.

Силослăх кукуруза та аван çитĕнет – вăл пурĕ 107 гектар çинче аталанать.

Çапла вара «Кубнинский» агро» ОООра выльăх-чĕрлĕх валли утă-улăмпа сĕтеклĕ апатсем çителĕклĕ хатĕрлесе хума тимлеççĕ.

**Василий ВОЛКОВ, Киччĕ ялĕ**

ПУÇАРУ БЮДЖЕЧĔН ПРОГРАММИПЕ

## Тимлĕхре – хăтлăх проекчĕсем

**Чылай çул ĕнтĕ Çĕнĕ Пуянкасси территори уйрăмĕнче граждансен пуçару бюджечĕн программипе ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ. 2023 çулта кăна акă ун майĕпе 17 проекта пурнăçа кĕртнĕ кунта, граждансен пуçарăвĕпе Çĕнĕ тата Кивĕ Пуянкасси ялĕсенчи çулсене 2500 метр тăршшĕ юсаса лайăхлатнă, вак чул сарса хытарнă, тарăн çырма урлă кĕпер хывнă, çӳллĕ ӳсе кайнă вată йывăççене касса типтерленĕ, виççĕмĕш ача-пăча вăйă площадки тунă тата ытти те.**

«Çаксем пурте ялсен хăтлăхне малалла ӳстерме, çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатса пыма май параççĕ. Кĕскен каласан, икĕ ялĕпе вак чул е асфальт сарса хытарман çулсем юлманпа пĕрех ĕнтĕ. Кивĕ Пуянкассинчи Горький, Соловьев урамĕсене, пĕр тăкăрлăка, Çĕнĕ Пуянкассинчи Мичурин, Çеçпĕл урамĕсене кăçал ĕлкĕрнĕ вак чул сарса. Çĕнĕ Пуянкасси ялĕнчи Терешкова урамĕнчи икĕ пĕвене те хĕлле тасатса тарăнлатнă»,–пĕлтĕр тата кăçал ку таранччен пурнăçланă ĕçсемпе паллаштарчĕ вырăнти территори уйрăмĕн специалисчĕ Наталия Алексеевна Максимова.

Урамсенчи çулсене юсаса лайăхлатассипе, вак чул сарса тикĕслессипе Владимир Илларионов, Станислав Данилов предпринимательсем, Макаров хресчен-фермер хуçалăхĕ тимленĕ. Пĕвесене тасатма та Илларионов предприниматель пулăшнă. Вĕсенче халĕ шыв тăрать, ял çыннисем пулă чĕпписем ярса ĕрчетес шухăшлă пулнине те илтрĕмĕр. Кĕршесем янă-çке, тĕслĕхрен, теççĕ.

Хĕллех Станислав Данилов бригади икĕ ялĕнчи çӳллĕ кармашнă ватă йывăççене касса типтерленине те пĕлтĕмĕр.

Ĕçлесен – ӳсĕнет, хăтлăх та кĕрет ялсене. Хамăр пурăнакан тăрăха вара кирек камăн та лайăхрах курас килет.

Пуçару бюджечĕн программипе кăçал Тăвай округĕнче 115 проекта пурнăçа кĕртме палăртнă. Çакă вăл уменхи çулхисенчен те нумайрах. Ку вăхăт тĕлне нумайăшне пурнăçланă та ĕнтĕ. Ыттисемпе малалла тимлеççĕ.

**Иван ИВАНОВ**



ÇЫРĂНТАРУ – 2024

**«Ял ĕçченĕ» хаçата 2024 çулхи июль-декабрь уйăхĕсенче илсе тăма çыхăну уйрăмĕсенче çырăнтараççĕ. Ултă уйăха – 619 тенкĕ те 74 пус. Альтернативлă йĕркепе çырăнмалли хак – 360 тенкĕ.**

# Уяв савăнăç кӳчĕ, нумайлăха асра юлĕ






(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.)

тата Чăваш Енри экологи культурин тата çут çанталăкпа тирпейлĕ усă курассин çулталăкĕсемпе килĕшӳллĕн хатĕрленĕ. Чăваш халăхĕ мĕн авалтан ĕçлеме те, савăнма та пĕлнĕ. Тырă акса пухса илни, ытти хресчен ĕçĕ-хĕлĕ ĕнентерӳллĕн сăнланчĕ юрă-ташă, тĕрлĕ хускану урлă. Несĕлсен ырă йăлисем çемье çирĕплĕхĕнче пысăк вырăн йышăннине те кăтартса пачĕç. Округри нумай ачаллă, хастар çемьесем сумлăн сцена çине хăпарчĕç. Сăмах майăн, уяв лапамне çитерекен Чапаев урамĕнчи çулăн айккипе Тăвай енри маттур çемьесен сăнĕсене салтак тӳмин (ромашка) чечекĕн çеçкисем çине вырнаçтарнă. Уява килекен кашни çыннах кăсăкланчĕ вĕсемпе. Театрализациленĕ представлени халăх пĕрлĕхне кăтартакан пысăк вăйă картипе вĕçленчĕ.

Тăвайри халăх хорĕ, «Сарпи», «Тăрмăш», « Тăвай Ен», «Сурпан», «Хавас», «Кĕтне шевлисем», «Сударушка» ансамбльсем, Тăвайри ача-пăча искусство, «Аль» спорт шкулĕсен воспитанникĕсем, Чăваш патшалăх культурăпа искусство шкулĕн студенчĕсем, хедлайнер – Чăваш халăх артистки Августа Ууляндина – пурĕ 300 çын ытла çын хутшăнчĕ пысăк лапамри представление. Çакă куракансене авалхи пурнăç авăрне путарчĕ, тăван ен историпе культурăн нумай енлĕхне витерӳллĕн сăнласа, малашлăх валли упрама чĕнчĕ.

Уявăн официаллă пайĕ Чăваш патшалăх симфони капелли (дирижерĕ Морис Яклашкин) Раççей тата Чăваш Ен гимнĕсене юрланипе уçăлчĕ.

Республика кунне муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов уçса саламларĕ. 11 çул хушшинче тăвайсем хăйсен территорийĕнче иккĕмĕш хут (пуçласа 2013 çулта иртнĕ) патшалăх уявне паллă тунине асăнчĕ. «Тăвай тăрăхĕн çĕр айĕнчи пуянлăхĕсемпе мухтанмалли ех çук пулсан та, хăйĕн паллă çыннисемпе вара мăнаçланма пултарать. Вера Кузьмина, Василийпе Геннадий Воробьевсем, Моисей Спиридонов, Никита Сверчков, Геннадий Козлов, Николай Казаков, Вячеслав Васильев, Валерий Иванов... Сумлă ентешсен ячĕсене малалла та тăсма пулать,– терĕ Олег Анатольевич.– Уяв ирттерме тивĕçни округра пурăнакансем пĕр шухăшлă, тăрăшса ĕçленин кăтартăвĕ».

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев Республика кунĕ ячĕпе саламларĕ. Уява кĕтсе илсе, Çĕнĕ Шупашкар хулинче сăрăсем тăвакан çĕнĕ производство, республикăра спорт объекчĕсем хута кайнине асăнчĕ. Олег Алексеевич ĕçченсене тав турĕ, пурнăç çулĕпе малашне те хастаррăн утма сунчĕ. Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станцин Мучарти ветучасток ветфельдшерне Борис Иванова «ЧР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», Тăвайри вăтам шкул учительне Надежда Гаврилована «ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ», «Коммунальник» общество директорне Юрий Ефимова «ЧР халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», Мускаври автомобильпе çул-йĕр институчĕн (МАДИ) Атăлçи филиалĕн директорне Наталья Евсюкована «ЧР вĕренĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ятсем парса чысларĕ. Округ пуçлăхĕн пресс-секретарĕ Галина Егорова «ЧР вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен службинче тӳрĕ кăмăлпа тăрăшнăшăн» паллăна тивĕçрĕ.

Хастарсен тепĕр ушкăнне Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тавĕпе алла çыхмалли сехет пачĕ. Вĕсен йышĕнче – «Чутеевский» ЯХПК председателĕ Виталий Гурин, муниципалитет округĕн строительство, çул-йĕр тата ЖКХ пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ Светлана Ванерке, ХФХ ертӳçи Надежда Федорова, Грачев ХФХ трактористчĕ Сергей Константинов, Тĕмерти вăтам шкул учителĕ Наталья Чернова.

Савăнăçлă лару-тăрура Раççей Федерацийĕн паспортне илни Александра Никитинашăн, Софья Симоновичпа Марина Хайдуковашăн пурнăçăн çĕнĕ тапхăрĕ уçăлнипе тата ăна Республика Пуçлăхĕн аллинчен илнипе асра юлĕ.

Çамрăк ăрăва патриотла



воспитани парас ĕçе пысăк тӳпе хывнăшăн ЧР тава тивĕçлĕ тата РФ тава тивĕçлĕ учительне Альфред Пимулина «Тăвай округĕн хисеплĕ гражданинĕ» ят парса чысланипе Чăваш Ен Пуçлăхĕпе округ ертӳçи саламларĕç. Çак хисепе Тĕмер ялĕнче çуралса ӳснĕ Николай Зайцев та тивĕç пулнă.

Хавхаланулла самант малалла тăсăлчĕ.

Агропромышленноç комплексĕн ĕçĕн хастарĕсене – Д.Алексеев ХФХ дояркине Валентина Кузьминана РФ ял хуçалăх министрĕн Тав хучĕпе, «Акконд-агро фирма» обществăн тракторисчĕсене Владимир Герасимовпа Владимир Ерастова, Надежда Иванова оператора ЧР ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе, «АККОНДМОЛОКО» ĕçченĕсене Анна Ананьевана, Олеся Кузьминана, Олеся Николаевана, Грачев ХФХ операторне Надежда Димитриевана, Николай Зайцев тракториста ЧР ял хуçалăх министрĕн Тав хучĕпе чысланă.

ЧР Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине «Коммунальник» общество слесарь-сантехникĕ Станислав Алексеев, Тăвай больницин врачĕ Татьяна Игнатьева, Кармалти ФАП заведующийĕ Римма Ильина, округри финанс пайĕн водителĕ Валерий Сергеев Патшалăх Канашĕн Председателĕн Леонид Черкесов аллинчен тивĕçнĕ.

ЧР экологи министрĕ Эмир Бедертдинов «Коммунальник» обществăри Виктор Кайсаровпа Сергей Шашков водительсене министерствăн Хисеп грамотисем панă. ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Юрий Зорин Инна Козлова медсестрапа Вăтаялĕнчи ФАП заведующине Валентина Кузьминана Тав çырăвĕсемпе чысланă.

ЧР Вĕрентӳ Министерствин Хисеп грамотипе вĕрентӳ пайĕн хуçалăхпа эксплуатаци ушкăнĕн начальникне Людмила Кондратьевана, Тав хучĕпе Тăвайри вăтам шкул вĕрентекенне Ирина Автономована наградăланă.

Республикăн муниципалитет йĕркеленĕвĕсен ĕç тăвакан директорĕ Александр Кузнецов территори уйрăмĕсен пуçлăхĕсене Дмитрий Белова, Алексей Матросова, Ирина Григорьева депутата, округ администрацийĕн пай пуçлăхне Николай Краснова Хисеп грамотисемпе чысланă. Çавăн пекех ĕçре ырă тĕслĕхлисене – Тушкилти клуб заведующине Наталия Георгиевана, ача-пăча библиотекин заведующине Наталия Уськинана, Тăвайри ДШИ преподавательне Наталия Федоровнана Чăваш наци конгресĕн председателĕ Валерий Клементьев Хисеп грамотипе наградăланă, «Тăвай Ен» ентешлĕх ертӳçи Алексей Ванерке Тушкилти волейбол командине хаклă парне парса хавхалантарнă. Тăрăшуллисен пысăк ушкăнĕ округ администрацийĕпе пуçлăхĕн грамотисемпе Тав хучĕсене тивĕçнĕ. Вĕсен списокĕ çитес номерте пичетленет.

Çурхи уй-хир ĕçĕсенче çĕнтернĕ хуçалăхсене чысланă: 1-мĕш вырăна «Акконд-агро фирма» АО, иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене «Дружба» ЯХПКпа Грачев, Илларионов, Моряков ХФХсем тухнă. «Çураки паттăрĕ – 2024» хăйăва Илларионов хресчен-фермер хуçалăх механизаторне Михаил Егорова çыхса янă. Вăл 45 çул ытла уй-хир ĕçĕсене хутшăнать,





вунпĕр хутчен çак пысăк чыса тивĕçнĕ.

Республика кунĕнче çамрăксен пултарулăхĕн номерĕсемпе киленсе паллашрĕç. «Ача-пăча акатуйĕнче» Тăвайри ача-пăча искусство шкулĕн пĕчĕк артисчĕсем, Çĕнĕ Пуянкассинчи, Элпуçĕнчи ташă ушкăнĕсем, садиксенчи, шкулсенчи, çавăн пекех Канашри, Вăрмарти ачасен коллективĕсем пултаруллă пулнине кăтартрĕç.



Уявра Шупашкарти трактор музейĕ тракторсен парадне хатĕрленĕ. Округри çурхи уйхир ĕçĕсене пурнăçлама хутшăннă ял хуçалăх техникисенчен курав йĕркеленĕ.

Килнĕ хăнасем Тăвай округĕнче Республика кунĕнче халăхăн культура пуянлăхне, ăсталăхне пур енлĕн кăтартнине палăртрĕç. Йăнтăрчă ял территори уйрăмĕн «Тăван çут çанталăк», Мучарсен – «Купеческая усадьба», Пуянкассисен «Чăваш тĕррин илемĕ», Тăрмăшсен – «Чăваш апат-çимĕçĕ», Тĕмерсен – «Тăван çĕршыва юратса», Чутейсен – «Чăваш ал ĕçĕ», Тушкилсен – «Несĕлсен сăвапĕ», Элпуçсен «Чăваш юмахĕсен тĕнчи», Тăвайсен «Эпир туслă çемьерен», Нăрвашсен «Çут çанталăк парнисем» хăна çурчĕсем чăваш апат-çимĕçĕнчен пуян пулчĕç – шăрттан, шӳрпе, чăкăт, тĕрлĕ кукăль-макăль тата ытти те. Хăнасене кăпăклă сăрапа сăйларĕç. Çавăн пекех авалхи ĕç хатĕрĕсене те кăтартрĕç.

«Тăрмăш» халăх ушкăнĕн ертӳçи Елена Матросова уйран уçланине кăтартса, услам çăвне пĕлĕм çине сĕрсе хăналарĕ. Ал арманĕпе кĕрпе тунине çамрăксем интересленсе сăнарĕç. Йăнтăрчăсен килтĕрĕшри хатĕрсем пĕтĕмпех çут çанталăкпа çыхăннă. Вунвун тĕрлĕ сиплĕ курăкпа паллашма май пулчĕ. Тĕмерсен «пӳрчĕ» патриотизм туйăмĕпе çыхăннă, маскировка çыхмалли станок вырнаçтарнă кунта. Вăрçă паттăрĕн Николай Афанасьевăн пурнăçĕпе çыхăннă материалсем нумай тăратнă.

Хăна çурчĕсемпе юнашар пĕчĕк сцена янтăланă. Елчĕк тăрăхĕнчи «Шуçăм» фольклор тата «Тускил» вокалпа инструментсен ансамблĕсем юрлани таçтанах илтĕнчĕ. Вĕсем ĕлĕк-авал Тăвай çĕрĕ çинчен ырлăх шыраса тухса кайнă. Кӳршĕсен нумай ял ячĕсем тăвайсеннипе пĕрешкел: Тĕмер, Тушкил, Элпуç, Тăрмăш, Кармал... Çыхăнăва халĕ те татмаççĕ пĕр-пĕринпе. Татах та тăвансене тупрĕç, паллашрĕç. Тăвай Енре Вăрмарти «Парне», «Задоринки», «Вдохновение», Красноармейскинчи «Трак Ен», Шăмăршăри «Сурпан», Етĕрнери «Пилеш» ушкăнсем, Çĕмĕрлесен халăх хорĕ пултарулăхĕпе хавас кăмăл парнелерĕç. Хăйсем Тăвай тăрăхне килсе курнишĕн питĕ савăннине, уява лайăх йĕркелесе иртternине хавхаланса пĕлтерчĕç.

Уявра тĕрлĕ халăх тумĕсене тăхăннисем те пулчĕç. «Раççей çăлкуçĕсем» Пĕтĕм Раççейри халăх пултарулăхĕн фестивальне Тăвай ене 5 ушкăн – «Чебеляй» (Удмурт), «Ялкын» Пушкăртстан ташă коллективĕсем, «Златоцвет» (Тюмень), «Тарантасик» (Оренбург облаçĕ), «Горлица» (Свердловск облаçĕ) халăх ансамблĕсем килнĕ, тĕрлĕ халăх юрри-ташшине кăтартса чаплă концерт парнелерĕç.



Уяв лапамĕ кĕрлесе кăна тăчĕ. Спортпа кăсăкланакансем те ăсталăхне кăтартрĕç. Уйрăмах кĕрешӳçĕсен ăмăртăвĕ çынсене хăй патне туртрĕ. Пысăк ăсталăхпа вăй кăтартса чи пысăк парнене – такана Денис Яшутин çĕнсе илчĕ. Тĕрлĕ виçесенче Дмитрий Спиридонов, Игорь Павлов, Дмитрий Соколов, Артем Григорьев, Даниил Крылов, Денис Степанов çĕнтерчĕç. Самбăна та нумай çын пăхса киленчĕ, малтисен йышĕнче – Ростислав Сидоров, Евгений Борисов, Иван Хованский, Арсений Антонов, Дмитрий Спиридонов, Ксения Яковлева, Денис Семенов, Анна Еврукова, Денис Яшуткин. Кире пуканĕ йăтакансем хушшинче Вячеслав Белков, Георгий Жарков, Полина Дмитриева, Дмитрий Белков, Эдуард Буинцев, Юрий Павлов, Александр Кириллов хăйсем вăйлă пулнине кăтартрĕç. Алă вăйĕ виçекенсенчен Камилла Павловапа Николай Михайлова çитекен пулмарĕ. Канат тăрăх хăпарассипе Денис Семенов, Никита Рассадников, аслăраххисенчен Евгений Шакинпа Артем Горбунов тĕп парнене тивĕçрĕç.

Тăвай ентешлĕхĕн Кубокне çĕнсе илессишĕн хĕрарăмсен командисем хушшинче малти вишĕ вырăнта – тăрмăшсем, тушкилсем, нăрвашсем. Арçынсем хушшинче кубока тушкилсем тивĕçнĕ, тăрмăшсемпе пуянкассисем 2–3 вырăнсене пайланă.

Боксерсен тупăшăвĕнче Йĕпреç, Вăрмар, Çĕрпӳ, Çĕнĕ Шупашкар, Шупашкар, Канаш спортсменĕсем те кĕрешнĕ. Çĕнтерӳçĕсен пьедесталне ытларах вĕсем йышăннă. Тăвайсенчен Данил Бокчаревпа Артем Сергеев палăрнă.

Хаваслă юрă-кĕвĕпе пĕрлех кунĕпех тутлă апат-çимĕç шăрши таврана саланчĕ. «Тăвайри кооператив» потребобщество ытларах сутуилĕве вырăнти продукцие кăларчĕ. Тутарстанран та уяв савăнăçне пайлама, тĕрлĕ таварпа тивĕçтерме килсе çитнĕ. Хамăрăн предпринимательсем Андрей Моряков, Александр Кузнецов, Владислав Кузьмин аш-пăш продукчĕсем, çырла сĕнчĕç. Ураскассинчи Эльвира Александрова килти условисенче 30 яхăн сортлă сыр туса кăларать. «Аккондагро фирмăн» цехĕнче кăларакан йогуртсене активрĕç, тутлă тесе хакларĕç.

Уяв программине коляскăсен парадне кĕртни те çĕнĕлĕх пулчĕ тăвайсемшĕн. Ача кӳмисене еплерех капăрлатнă тата! Акă Тăрмăшри Николаевсем виçĕ ачипех килнĕ парада, пĕчĕк хĕр пĕрчине карета çине лартнă. Çĕнĕ Пуянкассинчи Николаевсен 5 ачаллă çемйинче пурте наци тумĕпеччĕ. Анжелика Егорова тĕп редактор та Аделина хĕрĕпе хутшăнчĕ.

Ача-пăча валли темĕн тĕрлĕ киленĕç те пулчĕ: батут çинче сикрĕç, каруççельпе ярăнчĕç, аслисемпе пĕрле лашасемпе хусканусем туса чупакансене пăхса савăнчĕç. Пурне те çырса пĕтерейменĕн. Пур çĕрте те ал ăстисен куравĕсем ĕçлерĕç. Зоя Семенова, Нина Семенова, Венера Николаева хĕрарăм капăрлăхĕсем ăсталаççĕ. Тушкилти Алексей Васильев, акă, йывăçран каскалама юратать. Наталия Георгиева – карçынкка ăсти, Нăрвашри Галина Сергееван, Татьяна Лукинан, Татьяна Денисован, Мучарти Елена Козинан ĕçĕсем те хăйсем патне туртрĕç. Тĕмерти Нина Якуркина пĕтĕмпех пукане валли çи-пуç капăрлатса çыхать. Енĕш Нăрвашри çамрăк амăшĕ Настя Маркова пепки валли çекĕлпе теттесем çыхнине кăтартрĕ. Пуянкассинчи Надежда Васильева тухья, хушпу тата ытти наци эрешĕсем тăвассипе мастер-класс ирттерчĕ.

Вĕренӳ учрежденийĕсен представителĕсем те уяв хăнисене интереслентерсе, тĕрлĕ пултарулăх ĕçĕсене сĕнчĕç. Тăвай шкулĕн пĕр палаткинче Альбина Михайлован «тĕпчевçисем» шыв пахалăхне тĕрĕслеççĕ, вырăс чĕлхи вĕрентекен Людмила Терентьевапа Елена Борисован «Его величество театр» студийĕ юмах выляса пама хатĕр тăчĕ. Пазл-карта аслисене те кăсăклантарчĕ, Елена Павлова географ çапла майпа Чăваш Ен карттине тĕрĕс пухакансене сертификатпа тивĕçтерчĕ, «Шырав» ушкăн членĕсем Ирина Порфирьева ертӳçĕпе экспедици ĕçне уяв кунĕнче те тăсрĕç.

«Пĕрремĕшсен юхăмĕн», «Ачалăх навигаторĕсен» ĕçĕ-хĕлĕпе паллашакан та йышлă. Тĕмер шкулĕн «Ĕмĕтсен йывăçĕ» умĕнче, фотозонăра ӳкерĕнес текенсем черете тăнă, ав. Туянас кăмăл пуртан-и, илемлĕ чечексене мĕнле ăсталани çинчен ыйтаыйта пĕлчĕç. «Асамат кĕперĕ» ача садĕнчи агролабораторири шăпăрлансем ĕçĕ-хĕлĕпе сăвăлласа паллаштарчĕç.

Савăнмалли, тĕлĕнмелли темĕн чухлех пулчĕ Республика кунĕнче. «Кун пек уяв Тăвайĕнче пулманччĕ-ха»,– тесе каларĕç уяв çыннисем, ăна йĕркелеме хутшăннисене чĕререн тав турĕç. ЧР Пуçлăхĕ О.А.Николаев та тăвайсен хастарлăхне, ĕçченлĕхне палăртрĕ.

Каçхине Тăвайри культура çурчĕ умĕнчи кану скверĕнче Шупашкар артисчĕсен концертне курса савăнчĕç.

**Раиса ШУМОВА**



# Ыррине курма, хаклама вĕрентет

КУЛЬТУРА

**Районти культура пурнăçĕнчи пысăк пулăм – тĕп юсав хыççăн кăçалхи Республика кунĕнче Тăвайри халăх краеведени музейĕ савăнăçлă лару-тăрура çĕнĕрен уçăлни, çынсене хапăл йышăнма тытăнни. Уйрăммăн та, ушкăнпа та пыраççĕ çынсем унта. Юнкун акă шкул автобусĕсем те пĕрин хыççăн тепри çитсе чарăннă çĕнелнĕ музей умне: Тĕмер, Чутей, Тăвай шкулĕсенчен пынă вĕренекенсемпе вĕрентекенсем. Музей заведующийĕ Владимир Валерьянович Федоров тараватлă кĕтсе илнĕ вĕсене. Ĕнер телевидени те килнĕ.**

Раççей Президенчĕ Владимир Путин пуçарнă «Культура» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн Тăвайри халăх краеведени музейне 2023 çулта 15,5 миллион ытла тенкĕлĕх юсаса çĕнетнĕ. Çак суммăра федераци бюджечĕн укçи 15,3 миллион ытла тенкĕпе танлашнă, ытти – республикăпа вырăнти бюджетсенчен. Çапла майпа округри тĕп музей çурчĕ шалтан та, тулашран та çĕнелнĕ. Кăçал Республика кунĕ умĕн ун умĕнчи площадкăна та çĕнĕрен асфальт сарса якатнă. Хăтлă çĕре халăх мĕнле пымасăр тăтăр.

«Культурăн тĕп тивĕçĕ – çынсене ыррине курма, хаклама вĕрентесси, илемпе килĕшӳ патне туртăнма хавхалантарасси, пурнăçри кăткăс ыйтусем тавра шухăшлама хăнăхтарасси. Культура çынсене иртнипе хальхи вăхăт çыхăнăвне туйма, ăна пуласлăхпа çыхăнтарма, аслă Раççейри нумай нациллĕ халăхсен культура, истори, вĕрентӳ хутлăхĕн пĕрлĕхне курма май парать»,–тенĕ Раççей Президенчĕ Владимир Путин Федераци Пухăвне янă Çырура.

Чăваш Республики вара «Культура» наци проектне активлă пурнăçа кĕртсе пыракансенчен пĕри пулни çинчен каланăччĕ ЧР культура министрĕ Светлана Каликова. Вăл Тăвайри халăх краеведени музейне юсанине тимлĕхре тытнă, хăй те пĕрре мар пулнă унта çав вăхăтра. Халĕ музее уçма та хутшăннă.

2019 çултанпа пирĕн Тăвай округĕнче çĕршывăн культура аталанăвĕн программине пурнăçласа ялсенчи ултă культура çуртне юсанă тата модернизациленĕ. Çак шута Енĕш Нăрвашри, Тăрмăшри, Тушкилти, Тăвайри тата ытти хăш-пĕр культура çурчĕсем кĕреççĕ. Тăвайри культура çуртне хăйне кăна 34 миллион ытла тенкĕлĕх çĕнетнĕ. Светлана Каликова министр культура учрежденийĕсене тĕпрен юсаса тата ку чухнехи оборудованипе çĕнетнине пула та халăх культура мероприятийĕсене çӳресси чылай йышланнине палăртнă. Округра халĕ модернизациленĕ клуб учрежденийĕсем сахалтан та вунă. Кăçал автоклуб та панă.

2023 çулта халăх пуçарăвĕпе тата ялсенче пурăнакансем хăйсем те укçа пухса панипе тата республикăпа вырăнти бюджетсенчен укçа уйăрнипе Çĕнĕ Ишпуç, Нӳшкасси, Чӳкçырми ялĕсенче 49-шар вырăнлă çĕнĕ клубсем хута кайнă.

Çапах та чи пĕлтерĕшли – культура ĕçченĕсен, вырăнти артистсен пултарулăхĕ. Тăрмăшра та, Тушкилпе Енĕш Нăрвашра та, ытти ялсенче те маттурлăхпа палăрнă вĕсем. Акă ман умра Тăрмăшри культура çурчĕ çумĕнчи «Тăрмăш» халăх фольклор ушкăнĕ (ертӳçи – ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Елена Матросова, купăссçи – Николай Петров) Йĕпреç тăрăхне çитсе хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарни çинчен район хаçатĕнче çырса кăларнă «Халăх уявĕсем пĕрлештереççĕ» статья. Тепри – «Регионсен фестивалĕнче çĕнтертĕмĕр» ятлă. Унта Тăрмăшри культура çурчĕ çумĕнчи Матросовсен «Тăванлăх» çемье ушкăнĕ Чăваш Республикинчи Елчĕк муниципалитет округĕнче регионсем хушшинче иртнĕ «Янра, хуткупăс»!» фестиваль-конкурсра çĕнтернине çырса кăтартнă. Çемье ансамблĕсен хушшинче «Тăванлăх» ушкăна жюри 1-мĕш вырăнпа хакланă. Вĕсемех Шупашкарти тракторсем тăвакансен культура керменĕнче иртнĕ Пĕтĕм Раççей шайĕнчи хор коллективĕсен фестивальне те хутшăннă. Тăрмăшсемех Кемĕр облаçне фестивале çитсе килнĕ тата ытти те.

Чăнах, мĕнле уяв вăл юрă-ташăсăр! Тăвай тăрăхĕнчи Енĕш Нăрваш ялĕ çывăхĕнчи «Упа кĕтесĕ» кану базинче иртнĕ «Ялта чи лайăххисем» агрослетра та республикăри муниципалитет округĕсемпе хуласен делегацийĕсем концертсем йĕркелесе пултарулăх номерĕсемпе савăнтарнă. Унтах Тăвайри ача-пăча искусство шкулĕн воспитанникĕсем хăйсен номерĕсене кăтартнă. Тушкилти «Сурпан» ансамбль те хăйĕн пултарулăхĕпе республикипех палăрнă. Улянкăри «Мерчен» тата Мучарти «Сударушка» ушкăнсем, Çĕнĕ Пуянкассинчи культура çурчĕн артисчĕсем сумлă уяв-фестивальсене хутшăнаççĕ, юрри-ташшипе халăха савăнтараççĕ.

**Иван ГЛАДКОВ**

# Тĕпрен çĕнетнĕ музей çуртĕнче

**«Культура» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн Тăвайри музей юсаса çĕнетнĕ хыççăн хăйĕн алăкĕсене уçрĕ. Унччен хипе танлаштарсан тĕпрен улшăннă: урай-маччана, пӳлĕмсене, коммуналлă системăсене улăштарнă. Интереслентерекен экспоната ирĕк пӳлĕмсенче тӳрех асăрхатăн.**

Чутей шкулĕнчи вĕренекенсем тепĕр темиçе кунтанах унта çул тытрĕç. Кармал ялĕнче çуралса ӳснĕ Николай Афанасьев вăрçă паттăрĕн тăванĕпе Елизавета Николаевна Толмашенкопа тĕл пултăмăр. Малтан Кармалти библиотекăра ĕçлекен С.Л.Шашкова 20 çулхи паттăр салтакăн ачалăхĕпе, çамрăклăхĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ, аса илӳсен йĕркипе хатĕрленĕ видео кăтартрĕ, ачасен ушкăнне икке пайласа «Вăрçă паттăрĕ» викторина ирттерчĕ. «Экознайка» ачисем пултаруллă, анлă тавракурăмлă пулни палăрчĕ. Унтан Елизвета Николаевна пуçтарăннисемпе çавра сĕтел хушшинче ăшпиллĕн калаçу пуçарчĕ, хăй çырнă кĕнекесемпе, историлле документсемпе, тĕпчев ĕçĕсемпе паллаштарчĕ. Тверь облаçĕнчи Ржев таврашĕнчи Сухуша ялĕнчен енчĕкпе илсе килнĕ вил тăприне куртăмăр. Ун хыççăн музей директорĕ Владимир Федоров килнисене залсенчи экспонатсемпе паллаштарчĕ. Музейри тĕлпулу кашнин асĕнче юлмалла иртрĕ.

**Людмила МИХАЙЛОВА, вĕрентекен**




# Лифтсем вырнаçтарнă

Республика кунĕ умĕн Тăвай больницинче сипленекен стационарта икĕ лифт вырнаçтарса хута янă. Çакă инвалид, йывăр чирлĕ, утсах çӳреймен пациентсене 2 тата 3-мĕш хутсене чăрмавсăр çитерме пулăшать. Медицина ĕçченĕсемшĕн те меллĕ. Чирлисен çывăх çыннисем те тав тăваççĕ.

Çакна тумашкăн Чăваш Республикин бюджетĕнчен 8 миллион тенкĕ ытла уйăрнă.

**Алексей СТЕПАНОВ, тĕп врач**

## КĔСКЕН

* Иртнĕ эрнере Шупашкар хула депутачĕсен Пухăвĕн черетсĕр пухăннă 44-мĕш ларăвĕнче Владимир Доброхотова пĕр саслă пулса Шупашкар хула пуçлăхне çирĕплетнĕ. Вăл муниципалитет тытăмĕнче 30 çул ытла тăрăшать. Шупашкар хула пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçланă вăхăтра хăйне тухăçлă ертӳçĕ пулнине кăтартнă.

* ЧР Патшалăх Канашĕ йĕркеленнĕренпе 30 çул çитнине халалланă уяв Шупашкарти Ухсай Яккăвĕ ячĕллĕ культура керменĕнче иртнĕ.

* «Раççей ĕçĕ» кадрсен центрĕн Вăрмарти уйрăмĕнче «Вăрмарти ĕçлĕ аннесем» ятлă клуб уçнă. Вăл вакансисемпе паллаштарать, çĕнĕ специальноçсене алла илме пулăшать тата ытти те.

* Щупашкарта «Чăваш Республикин çирĕп аталанăвĕн мегапроекчĕсем: Цифра энергорегионĕ» стратеги сессийĕ иртнĕ. Сăмах малашлăх аталанăва никĕслекен отрасль пирки пырать. Потребительсене энергипе шанчăклă тивĕçтересси – асăннă проектăн уйрăм тимлĕхĕнче.

* Муркаш округĕнчи Ильинкăри ватă юмана Мускаври «Сывă вăрман» шкул специалисчĕсем тĕпчеме тата сиплеме тытăннă. Асăннă юман пĕлтĕр «Раççейĕн çулталăкри йывăçĕ» конкурсра çĕнтерсе çĕршывĕпех палăрнă, хăйĕн «сывлăхне» çирĕплетме сертификат çĕнсе илнĕ. Халĕ вăл – 373 çулта, чăннипех чăваш юманĕсен аслашшĕ.

Канаш лесничествин Сиккассинчи участокĕн лесничийĕ Вячеслав Артемьев пĕлтернĕ тăрăх, Тăвай вăрман хуçалăхĕ пулнă çулсенче Чутей ялĕ çывăхĕнчи юмана та чи ватă йывăççен шутне кĕртнĕ.

## ФИНАНС ПĔЛĔВĔ

# Пĕчĕк «финансистсем»

**Хĕр ачапа арçын ача лараççĕ скверти сак çинче. Ахăртнех, хăвăрт хушма-кăларма хăнăхаççĕ. «Иккĕ çумне иккĕ хушсан миçе пулать?»–пуçне арçын ача енне чалăштарса ыйтать хĕр ачи. «Сана миçе кирлĕ?»–куçĕпе тĕллет лешĕ. «Миçе кирлине мар, тĕрĕссине кала»,–кăмăлсăрланать хĕр ачи.**

Чылайччен шăкăлтатрĕç çавăн пек, пĕр цифра çумне тепĕрне хушрĕç, каялла кăларса та пăхрĕç. Паян магазинта миçе тенкĕ пĕтерни таранах тишкерчĕç. «Пĕр кассине ыран валли хăвармалла пулнă пирĕн, паянхи çинчен кăна шухăшлатпăр. Атте-анне мĕнле вĕрентет-ха пире: «Укçа шута юратать, унпа перекетлĕ пулмалла, тесе-и»,–тĕлĕнмелле ăслăн калаçать хĕр ачи. Çакна арçын ачи те хирĕçлемест. «Пирĕн укçа тытма вĕренмеллех, килĕшетĕп»,–тет. Вĕсем, ӳсĕмне кура мар ăслăскерсем, пĕр-пĕр усăллă ĕçе явăçса хăйсем укçа ĕçлесе илес пирки те калаçрĕç. Питĕ тĕлĕнсе итлесе лартăм юнашар сак çинче. Вĕсем пурнăçăн финанс пĕлĕвне, укçа-тенкĕ тытăмне ача çулĕсенченех çапла алла илме тăрăшни, ăнкарни савăнтарчĕ мана. Ӳснĕçемĕн укçа-тенкĕ пĕлтерĕшне, унăн вăйне тата тарăнраххăн ăнланса илме тăрăшĕç тесе шухăшларăм. Тен, ятарласа пĕлӳ те илĕç финанс енĕпе, çĕршывшăн усăллă пуçарусем тăвĕç. Анчах, кирек епле пулсан та, хăйсене пĕчĕклех çакăн пек тытма пĕлнипе кăмăллă юлтăм эпĕ.

**Иван ГЛАДКОВ**

## КОРРУПЦИЕ УМ ПӲЛСЕ

# Тӳрĕ кăмăл – чуна çăмăл

**«Ăçта коррупци, унта пурнăç арканать»,–аллине лаш сулчĕ чипер кăна телевизор пăхса ларакан çын. Вăл пысăк должноçри çынсем взятка илсе пурнăçра тĕрĕс мар çул çине тăни çинчен передача пăхса ларнă иккен.**

«Юрамасть вĕт çапла тума, юрамасть. Çӳлтисене кура аялараххисем те çавна хăнăхаççĕ. Ун пек тĕслĕхсем пурнăçа, çынсене пăсаççĕ. Тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пурăннинчен ырри нимĕн те çук. Эпĕ акă чĕрĕк ĕмĕр ертӳçĕре тăрăшрăм, нихăçан та взятка илме, укçалла сутăнас пирки шухăшламан. Пытармастăп, пĕр-пĕр ĕçе хăйсене майлă ăнтарас тĕллевпе укçа сĕнекенсем пулнă, анчах эпĕ ун пеккине татăклăн сивленĕ, яхăнне те яман»,–терĕ пăлханса. – Ыттисене те яланах таса чун-чĕрепе, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пурăнма сунатăп, унран ырри, тĕрĕсси нимĕн те çук»–хушса хучĕ вăл тепăртакран.

Кăштах чĕнмесĕр тăнă хыççăн вăл хăйĕн ачисене те çапла вĕрентсе ӳстернине каларĕ. **Иван ИВАНОВ**

## *МАНӐН ÇЕМЬЕ – МАНӐН ПУЯНЛӐХ*

Проект Чӑваш Республикин цифра аталанӑвӗпе информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин пулӑшӑвӗпе пурнӑçланать

# «Кирек ӑçта та – Михайловсем малта! Сывлӑхпа вӑй-хал – çӗнтерӳ çӑлкуçӗ!»

**Çак çемье девизӗпе Тӑрмӑшри Сергей Николаевичпа Екатерина Анатольевна тата вӗсен 13, 10 çулсенчи Аннӑпа Александра хӗрӗсем ума лартнӑ тӗллевсене пурнӑçлама ӑнтӑлаççӗ. Малашлӑхри ӗç-хӗлсене пӗрле сӳтсе явма хӑнӑхнӑран çак чӗнӳ те тӳрех çуралнӑ вӗсен. Михайловсен çемйи паян Пуянкассинчи Кирилловсен, Ураскассинчи Никифоровсен, Вӑрманхӗрринчи Сормовсен спортпа туслӑ çемйисен ырӑ йӑли-йӗркисене малалла тӑсаççӗ. Вӗсем «Демографи» наци проекчӗн «Спорт – пурнӑç йӗрки» федераци проекчӗн тӗп тӗллевне – ваттине те, вӗттине те физкультурӑпа туслаштарассипе чылай тӑрӑшнине палӑртма кӑмӑллӑ. Тӑвай енре вӗсене хисеплеççӗ, вӗсен çитӗнӗвӗсемпе кӑсӑклансах тӑраççӗ, пӗрле савӑнаççӗ.**

Михайловсен ырӑ тӗслӗхӗ паян нумайӑшне спортпа çывӑхланма пулӑшать. Кӑçалхи июнь пуçламӑшӗнче «Упа кӗтесӗ» кану базинче иртнӗ «Ялта чи лайӑххисем» агрослетӑн спартакиадинче çемье команди хӑйӗн вӑй-хӑватне кӑтартса «Чи лайӑх спорт çемйи» номинацире çӗнтерчӗ. Ку çеç-и-ха, Тӑвай çӗрӗ çинче виççӗмӗш хут йӗркеленӗ Раççейри çак чи пысӑк форум ӑнӑçлӑхӗшӗн округри добровольцсемпе пӗрле хастар мӑшӑр та ырми-канми вӑй хунине асӑнчӗç округ администрацийӗнче.

Иртнӗ çул вӗçӗнчи Раççей шайӗнчи тепӗр çитӗнӗвӗ те ентешсене хавхалантарнӑ. Мордва Республикинче «Спорт – яла» фестивальте Чӑваш Ен чысне хӳтӗлесе иккӗмӗш вырӑна тивӗçнӗ. Эстафетӑра «ылтӑнлӑ» пулнӑ, Анна спортӑн тӗрлӗ тӗсне пӗрлештерекен ГТО дисциплининче пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ. Дартспа ӑмӑртса та çемье кӑтартӑвӗ пысӑк пулнӑ.






## Спорт туслаштарнӑ

Катьӑпа Сергея спорта юратни çывӑхлатнӑ. Иккӗшӗ те пӗр çулхисем, 1992 çулта çут тӗнчене килнӗ. Тӑрмӑш каччи савнӑ мӑшӑрӗпе, Вӑрнар хӗрӗпе, Канашри педагогика колледжӗнче паллашнӑ. Шкулта вӗреннӗ чухнех çӑмӑл атлетикӑра, йӗлтӗрпе чупассипе, футболла выляссипе палӑрнӑ каччӑ вӗренӳ заведенийӗн командипе те, ял тӑрӑхӗшӗн те тӗрлӗ шайри тупӑшусенче палӑрнӑ. Хӑйӗн çирӗп вӑй-халӗпе тыткӑнланӑ пикене. Катя ачаран йӗлтӗрпе чупассипе вӑйлӑ пулнӑ, шывра ишме кӑмӑлланӑ.

Алла диплом илнӗ специалистсемшӗн Тӑвайри «Аль» физкультурӑпа спорт шкулӗнче вырӑн тупӑннӑ. Сӑмах майӑн, Сергей Николаевич ФСК уçӑлнӑранпах унта тренер-преподавальте тӑрӑшать, волейбол, футбол секцийӗсене ертсе пырать, çамрӑксене тӗрлӗ енлӗ аталанма, самана майӑн ӑс-хакӑлне тарӑнлатма пулӑшать. Хӑй те пӗлӗвне ӳстерсе ӗçленӗ вӑхӑтрах аслӑ пӗлӳ илнӗ. Екатерина Анатольевнан ӗç çулӗ те çак учреждение физкультура инструкторӗнчен çырӑннӑ. Нумай ачашӑн ишес енӗпе пӗрремӗш вӗрентекен пулнӑ. Тӑвай округӗн ишевçисем ӑмӑртусене хастар хутшӑнма пуçланӑ. Ӗçе чунтан пурнӑçлакан хӗрарӑмӑн тата ачисен çитӗнӗвӗсем ашшӗ-амӑшне те савӑнтарнӑ.

Михайловсем вун виçӗ çул пӗрле пурӑнаççӗ. Туслӑ çемьере икӗ хӗр çитӗнет. Вӗсем ялан ашшӗ-амӑшӗпе юнашар. Тӑтӑшах округри, республикӑпа ун тулашӗнчи ӑмӑртусене хутшӑнаççӗ. Çавӑнпа вӗренӳре ыттисенчен ан юлччӑр тесе пӑшӑрханасси те пулать.

«Хамӑра кура ачасем мӗн пӗчӗкрен спортпа туслӑ çитӗнеççӗ. Эпир вӗсене нихӑçан та спортӑн ку е вӑл тӗсне ирӗксӗрлесе хутшӑнтарман. Хӑйсемех эпир суйланӑ ӗç патне туртӑнаççӗ,–чуна уçса калаçрӗ юратнӑ амӑшӗ Екатерина Анатольевна. Унтан çапла хушса хучӗ: – Чӑваш Ен командипе ӑçта кӑна пулмарӑмӑр-ши? Пысӑк стадионсенче спорт çӑлтӑрӗсене курни-сӑнани те çитӗнӳсем патне туртать вӗсене. Спорт дисциплинӑна хӑнӑхтарасси, характера йӗркелесси çине те витӗм кӳнине палӑртса хӑвармалла.

Тӑрмӑш шкулӗнчи спортзалра та, «Аль» спорт шкулӗнчи бассейнра та, уçӑ сывлӑшри тренировкӑсенче те пӗрле вӗсем, ашшӗ-амӑшне çур сӑмахранах ӑнланаççӗ. Аннӑпа Александра иккӗшӗ те йӗлтӗрпе чупассипе, ишессипе, çӑмӑл атлетикӑра муниципалитетри ӑмӑрту-чупусенче палӑрма ӗлкӗрнӗ. Ал ӗçӗсем те чунра ырӑ туйӑм çуратаççӗ. Анна садике çӳренӗ вӑхӑтра çӗнӗ çул парни ӑсталаса, чи пирвайхи грамотӑна тивӗçнӗ. Александра мӗн пӗчӗкрен юрлас пултарулӑхӗпе тыткӑнлать. 2020 çулта «Тӑвай çӑлтӑрӗсем» районти конкурс лауреачӗ пулнӑ. Чӑнах та, ачасем ӑшӑ, телейпе юратуллӑ çемьере ӳсни вӗсен çӑлтӑр пек çунса тӑракан куçӗсенчен те лайӑх курӑнать. Вӗренме, çӗннине пӗлме ӑнтӑлаççӗ. Хӑйсен çитӗнӗвӗсемшӗн тивӗçнӗ наградӑсене хаклама пӗлеççӗ. Портфолиосене те хӑйсемех хатӗрлеме вӗренсе çитнӗ: аслӑ хӗрӗн 13, кӗçӗннин 8 хутчен Хисеп хутне тивӗçни çинчен çырни пур унта.

## Вӗрентекен

«Ӗçе чунтан юратсан, ун валли вӑхӑта, чун-чӗре ӑшшине шеллемесен çитӗнӳсем пулаççех»,–терӗ Тӑрмӑшри вӑтам шкул директорӗн тивӗçӗсене пурнӑçлакан Людмила Ивановна Матросова Екатерина Анатольевна физкультура учителӗ çинчен сӑмах хускатсан. Виççӗмӗш çул педагогика ӗçӗнче тӑрӑшакан хӗрарӑма ачасем юратнине, коллектив, ял-йыш хисепленине палӑртрӗ. Шкул ачисем йӗлтӗрпе чупассипе, ытти енӗпе вырӑнти ӑмӑртусенче кӑна мар, зонӑсенче, республикӑра мала тухаççӗ. ГТО нормативне пурнӑçлассипе вӗренекенсенчен ытларахӑшӗн ылтӑнпа кӗмӗл паллӑсем, учительсен те кӑтартӑвӗсем лайӑх. Çуллахи каникул вӑхӑтӗнче Е.Михайлова лагерьте канакан ачасен воспитателӗ пулнӑ, Тӑрмӑш шкулӗн команди округри спартакиадӑра призлӑ вырӑна тивӗçнинче вӗрентекенӗн тӳпи те пысӑк, паллах.

## Пысӑк çитӗнӳсемшӗн – наградӑсем

Михайловсен наградисем çинчен çӳлерех те асӑнтӑмӑрха. Кил хуçи хӗрарӑмӗпе çакӑн çинчен калаçнӑ май, хӑйсем пуçласа Республика Пуçлӑхӗн кубокӗшӗн пынӑ фестивале хутшӑннине куç умне кӑларчӗ. 2017 çулхи «Атте, анне тата эпӗ – спортпа туслӑ çемье» ӑмӑрту вӗсемшӗн регион шайӗнчи пӗрремӗш тӗрӗслев пулнӑ. 26 команда хушшинче 8-мӗш вырӑн йышӑнни аван кӑтарту, анчах вӗсене тивӗçтерсех кайман, хатӗрленӳ ӗçӗсене çӗнӗлле пӑхма хистенӗ. Тепӗр çулне «Ял ӗçченӗ» хаçат призӗшӗн пынӑ чупура умлӑ-хыçлӑ çӗнтернӗ. Республикӑра А.Г.Николаев космонавта асӑнса ирттернӗ чупура 111 командӑран виççӗмӗш пулнӑ. 2022 çулта Раççей шайӗнчи ӑмӑртура республикӑн пӗрлештернӗ команди йышӗнче шашкӑлла выляссипе ылтӑн, эстафетӑра пӑхӑр медальсем çӗнсе илнӗ. «Çулталӑк çемйи – 2022» конкурсра «Спортпа туслӑ çемье» номинацире чи маттуррисем пулнӑ. Унтан ЧР Пуçлӑхӗн призӗшӗн «Спорт çемйи» фестивальте çӗнтернӗ тата ытти. Вӗсен чыслав пухмачӗнче – общество пурнӑçӗнче пуçаруллӑ та хастар пулнӑшӑн хавхалантарнӑ Тав çырӑвӗсем, парнесем... Пур награда çинчен çырса та пӗтереймӗн.

Ашшӗ-амӑшӗн килне юхӑнтарас мар тата ялта пурӑнас тесе çемье Тӑвайӗнчи хватерӗнчен Тӑрмӑша куçнӑ. Хушма хуçалӑхӗнче темӗнле çимӗç те çитӗнет вӗсен. Чи пахи ачисене çӗр ӗçӗпе интереслентерни тесе шутлаççӗ. Пӗр-пӗрне ӑнланни, хисеплени çемьешӗн пысӑк тӗрев. Пӗрлехи ӗç çемьене çирӗплетнине пӗлтерчӗ Сергей Николаевич, çакӑн пек пултаруллӑ хӗр пӗрчисем çуратса панӑшӑн ачасен амӑшне тав турӗ. СВОран тинтерех отпуска килнӗ Александр шӑллӗшӗн те пиччӗшӗн çемйи чун ӑшши вырӑнӗнчех пулчӗ. Пӗр вӑхӑтрах Екатерина Анатольевнан ятарлӑ çар операцинчен килнӗ шӑллӗне те часрах çӗнтерӳпе, тӗрӗс-тӗкел таврӑнма ырӑ сунса ӑсатрӗç вӗсем.

**Раиса ШУМОВА**



# Пĕрлехи канашлу иртнĕ



**Виçĕмкун Тăвай муниципалитет округĕнче ЧР массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсемпе Чăвашпотребсоюз «Тăвайри кооператив» потребобществăн никĕсĕ çинче республикăри семинар-канашлу иртрĕ.**

Малтанах унта хутшăннисем Кивĕ Пуянкасси магазинĕнче пулнă. Ял лавккинче халăха заявка тăрăх чăх-чĕппе, хуркăвакалпа тивĕçтернĕ вăхăта çитнĕ вĕсем. Суту-илӳре тĕрлĕ таварсемпе пĕрле выльăх валли апат сутассине йĕркеленĕ. Вырăнти «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕ «Тăвайри кооператив» потребобщество магазинĕсем урлă альтернативлă майпа çырăнтару йĕркеленине пĕлтерчĕ потребобщество правленийĕн председателĕ Лилия Михайлова. Çак ялти 32 çын альтернативлă майпа илсе тăнине асăнчĕç сутуçăсем. «Йӳнĕрех те, хаçатпа пĕрлех магазинтан мĕн кирлине туянса каятпăр»,–терĕç вулакансем. Магазин урлă ял хуçалăх продукцийĕ, тĕрлĕ чĕртавар йышăнасси ӳссе пырать. Надежда Краснова, акă, пĕлтĕр те, иртнĕ çулсенче те Чăвашпотребсоюзри хатĕрлевçĕсен ăмăртăвĕнче палăрнă. Лавккара СВО салтакĕсене мĕн кирлипе тивĕçтерме пулăшу кĕтесĕ йĕркеленĕ.

